ФГОС

Т.В. Артемьева, С.Г. Михайлова,
Н.В. Иванова

# АЧАСЕНЕ ШКУЛЧЧЕН ВĔРЕНТМЕЛЛИ ТĔСЛĔХ ПРОГРАММА

**Пуплеве аталантарасси**
**Илемлĕ литературăпа паллаштарасси**
**Вырăс (тăван мар) чĕлхине вĕрентесси**

***Чăваш ача сачĕсем валли***

Т.В. Артемьева, С.Г. Михайлова,
Н.В. Иванова

# АЧАСЕНЕ ШКУЛЧЧЕН ВĔРЕНТМЕЛЛИ ТĔСЛĔХ ПРОГРАММА

**Пуплеве аталантарасси**
**Илемлĕ литературăпа паллаштарасси**
**Вырăс (тăван мар) чĕлхине вĕрентесси**

***Чăваш ача сачĕсем валли***

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2015

УДК 373.2
ББК 74.100.4
А 86

*Чăваш Республикин*
*Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви*
*шкулччченхи учрежденисенче усă курма сĕннĕ*

**Артемьева Т.В.**
А 86 Ачасене шкулччен вĕрентмелли тĕслĕх программа. Пуплеве аталантарасси. Илемлĕ литературăпа паллаштарасси. Вырăс (тăван мар) чĕлхине вĕрентесси / Т.В. Артемьева, С.Г. Михайлова, Н.В. Иванова. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2015. — 95 с.
ISBN 978-5-7670-2310-3

Программăра шкул çулне çитмен чăваш ачисен тăван пуплевне аталантармалли, вĕсене илемлĕ литературăпа паллаштармалли, вырăс (тăван мар) чĕлхине вĕрентмелли ĕçсен уйрăмлăхĕсене, тĕллевĕсемпе задачисене, вĕсен содержанине, йĕркеленĕвне уçса панă. Унпа шкулччченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсем, педагогика университечĕсемпе колледжĕсен преподавателĕсемпе студенчĕсем усă курма пултараççĕ.

**УДК 373.2**
**ББК 74.100.4**

© Артемьева Т.В., Михайлова С.Г., Иванова Н.В., 2015
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2015

**ISBN 978-5-7670-2310-3**

# КӲРТĔМ

«Ачасене шкулччен вĕрентмелли программа. Пуплеве аталантарасси. Илемлĕ литературăпа паллаштарасси. Вырăс (тăван мар) чĕлхине вĕрентесси» ĕçе Раççей Федерацийĕн Вĕренӳ тата аслă шкул министерстви 2013 çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнче (1155 номерлĕ приказ) çирĕплетнĕ шкул çулне çитменнисен вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕпе килĕшӳллĕ калăпланă. Ăна чăваш наци шкулччченхи вĕренӳ учрежденийĕсен ĕçченĕсене меслетлĕх тĕлĕшĕнчен пулăшас тĕллевпе хатĕрленĕ.

Программа чăваш ачисен тăван пуплевне аталантарас, вырăс чĕлхине ютла вĕрентес, литературăпа паллаштарас, шкулччченхи ĕçсене çирĕп йĕркене пăхăнтарас тĕллев лартмасть. Вăл концепци пĕлтерĕшлĕ. Ăна вĕренĕвĕн тĕп задачисене çĕнĕ федераллă стандартпа килĕшӳллĕ татса памалли никĕс вырăнне йышăнмалла. Шкулччченхи вĕренӳ учрежденийĕсен коллективĕсем программăн уйрăм пайĕсене улшăнусем кĕртме пултараççĕ. Çапах та, тĕпрен илсен, программăн мĕнпур пайĕн пĕр пĕтĕмлĕхĕпе çыхăнулăхне сыхласа хăварас пулать.

Программăпа Раççей Федерацийĕн чăвашсем йышлă пурăнакан ытти регионсенчи шкулччченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче те усă курма пултараççĕ.

# ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ

## Умĕн калани

Пуплев ача аталанăвĕшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа шкулччenхи ачасене вĕрентес-ăс парас ĕçре пуплеве аталантарасси тĕп задачăсен шутне кĕрет.

Сăмах ачана çынсен тĕнчине кĕме çул уçать, ăна ăнланса илме, унта хăй вырăнне тупма пулăшать. Чĕлхепе усă курса ача хăйĕн харкамлăхне ăнланса илет, общество пурнăçне активлă хутшăнма хатĕрленет. Пуплев пĕчĕк пепкешĕн хăйĕн кăмăл-туйăмне палăртмалли, ыттисемпе хутшăнмалли тĕп хатĕр пулса тăрать, чĕлхе пулăшнипех вăл хăйне тĕрлĕ лару-тăрура тĕрĕс тытма вĕренсе пырать. Сăмах пулăшнипе ача хăй таврари япаласемпе, пулăмсемпе, çут çанталăкпа паллашать, ăса хывать. Сăмахăн пĕтĕмлетӳ функцине пула ача ăсĕ çӳллĕрех шая çĕкленет, унăн абстрактлă шухăшлавĕ аталанать. Çапла вара, малашне пур енлĕ ĕçе хутшăнма хатĕрленмелли, тĕрлĕ енлĕ пултарулăха аталантармалли никĕс йĕркеленет.

Кĕçĕн çулхи ачасемшĕн вĕрентӳпе ăс пару никĕсĕ, унăн тĕп хатĕрĕ — тăван чĕлхе пулать. Пĕчĕк ачана ăнăçлă вĕрентсе ăс-тăн парасси чи малтан вăл хăйĕн тăван чĕлхипе тухăçлă усă курма пултарнинчен килет. Тăван чĕлхепе калаçма вĕреннĕ май ача харпăр хăй халăхĕн культурине ăша хывать, тăван халăхăн ăс-тăн тата тĕрлĕ пурлăх пуянлăхĕпе паллашать, тăван ен историне пĕлме пуçлать. Çакă пулас харкамăн наци ăнланулăхне аталантармалли çирĕп никĕс хывать.



## Программа уйрăмлăхĕсем, ăна никĕслекен принципсем

Программăна шкул çулне çитмен ачасен пуплев аталанăвĕн йĕркине, вĕренӳ учрежденийĕсен пуплеве аталантарас ĕç опытне шута илсе калăпланă. Ачасен пуплевне аталантарассин тĕллевĕсемпе задачисене, ĕç шалашне, йĕркеленĕвне шкулччenхисен кашни ӳсĕм ушкăнĕ валли пайрăммăн вĕсен ӳсĕм кăтартăвĕсене шута илсе палăртнă. Пуплеве атлантарассин содержанийĕнче пур ушкăнра та чĕлхе тытăмĕн сийĕсене пурне те (сăмах йышĕ, пуплевĕн сасă культури, пуплевĕн грамматика тытăмĕ, çыхăнуллă пуплев) вĕрентессине кăтартнă пулин те харпăрлама палăртнă хăнăхăвĕсем кашнийĕнче расна, ӳсĕм уйрăмлăхĕсемпе шайлашуллă.

Уйрăм ӳсĕмсен вĕренӳ содержанийĕ вĕçе вĕçĕн аталанса, тарăнланса пырать. Тăван чĕлхене вĕрентессин задачисем те кăткăсланаççĕ. Вĕреннине ушкăнран ушкăна пĕрмаях аса илсе çирĕплетни хăнăхусене алла çирĕпрех илме пулăшĕ. Кунпа пĕрлех ачасен аталану малашлăхне те шута илнĕ. Кĕçĕнрех ушкăнсенче калăпланнă хăнăху-ăслай аслăрах ушкăнсенчи вĕренӳ никĕсĕ пулма пултартăр тесе шутланă. Çапла вара, ачасен шкулччен калăпланнă пуплев ĕçĕхĕлĕн ăслай-хăнăхăвĕсем пуçламăш шкулта тăван чĕлхене вĕренессин никĕсĕ пулмалла.

Программăра вĕренӳ задачисемпе содержанине палăртнă чухне ачасен пуплев аталанăвĕн йĕркинчен тухса тăракан тĕп положенисем — принципсем — çинче никĕсленнĕ. Дидактикăн пĕтĕмĕшле принципĕсемсĕр пуçне тата меслетлĕх принципĕсене те шута илнĕ.

Тĕпчевçĕсем тăван чĕлхене вĕрентессин принципĕсене палăртасси меслетлĕхре тавлашуллă, çителĕклĕ тĕпчемен ыйту пулни çинчен калаççĕ. Меслетçĕсем ыйтăва тĕрлĕ позицирен тишкернине пула расна принципсем уйăраççĕ. Вырăссен паллă тĕпчевçисен (М.М. Алексеева, В.И. Яшина) шухăшĕсем çине тайăнса шкулччenхисен тăван пуплеве аталантарас ĕçре çак принципсем çинче никĕсленме пулать терĕмĕр.

***Ачасен ăс-тăн аталанăвĕпе пуплев аталанăвĕ тачă çыхăнни.*** Çак шухăш пуплеве ĕç-хĕл пек ăнланни çинче никĕсленет. Вăл ачасен шухăшлавĕпе пĕрлĕхлĕ аталанать. Çавăнпа вĕсен пуплеве аталантарас ĕçе шухăшлавне аталантарассипе тачă çыхăнтарса туса пымалла.

***Пуплеве харпăрласси чĕрĕ пуплевре пулса пыни, çыхăнуллă пуплев хутшăнура аталанни.*** Чĕлхен тĕрлĕ майĕсемпе усă курма вĕрентесси, ачасен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси чĕрĕ пуплевре тĕрлĕ пуплев лару-тăрăвне йĕркелесе вĕсене пултарулăх ĕçне явăçтарнă май пулса пымалла.

***Пуплев çине тайăнса чĕлхе пулăмĕсене ансаттăн ăса хуни.*** Вĕрентӳ тухăçлă пултăр тесен пуплев малти вырăнта пулмалла пулин те ĕçе йĕркелесси усăллă теори çине тĕревленмелле. Ача пуплеве евĕрлесе кăна харпăрламасть, чĕлхе пулăмĕсене ăнкарни çине те тайăнать. Çакна шута илсен, ача аслисене кăна евĕрлемест, хăй çĕнĕ калу йĕркелеме те вĕренсе пырать.

***Пуплевĕн тĕрлĕ енĕсене аталантарасси çыхăнуллă пулса пыни, пуплеве пĕрлĕхлĕ ĕç-хĕл пек аталантарни.*** Вĕрентĕве йĕркеленĕ чухне чĕлхе тытăмĕн пур сийĕсене харпăрласси çыхăнуллă пулса пымаллине асра тытмалла. Пуплевĕн пĕрпĕр енне аталантарнă май ытти енĕсен те тухăçлă аталанса пымалла. Тĕпре ачасен çыхăнуллă калу пуплевне аталантарасси пулмалла.

***Пуплеве аталантарас ĕçре хавхалантару майĕсем анлă пулни.*** Çакна шута илни вĕрентӳ ĕçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Енчен те кулленхи хутшăнура ачасем пуплевпе хăйсене кирлĕрен усă кураççĕ пулсан вĕренӳ процесĕнче вĕсем çак кирлĕлĕхе туймасан та пултараççĕ. Вĕсен педагог ыйтăвĕсене хуравлама, калаçма, асăмлама кăмăлĕ пулмасан та пултарать. Çавăнпа вĕренӳре ачасене пуплев ĕçĕ-хĕлне хутшăнма хавхалантарасси, çак тĕллевпе тĕрлĕ мелсемпе усă курасси, пуплев ситуацийĕсем йĕркелесси питех те пĕлтерĕшлĕ.

***Ачасемшĕн пуплев ĕç-хĕлне хутшăнма майсемпе сăлтавсем анлă пулни, вĕрентĕве вĕсен опычĕпе, пурнăçра кирлипе çыхăнтарни.*** Чĕлхен тĕрлĕ майĕсемпе усă курма вĕрентесси, харпăрланă ăслай-хăнăхусене çирĕплетесси пуплевре çеç пулса пыма пултарать. Ачасем пуплевпе усă курма пуплев практики анлă пулсан çеç ăнăçлă вĕренсе пыраççĕ. Ташламасăр ташлама вĕрентеймĕн, калаçмасăр калаçма вĕрентеймĕн. Çавăнпа занятисенче ачасен пуплев активлăхне çĕклес тĕллевпе тĕрлĕ мелсемпе, меслетсемпе анлă усă курмалла. Вĕренӳ содержанине палăртнă чухне çак шухăша та шута илмелле: тăван чĕлхене вĕрентнин усси — ачасем унпа кулленхи хутшăнура усă курма пултарни.

***Вĕренӳре тăван чĕлхе, тăван пуплев хăйевĕрлĕхне шута илни.*** Кашни чĕлхе хăй евĕрлĕ, пуплев йĕркеленĕвĕ те тĕрлĕрен. Тăван чĕлхене икчĕлхелĕх уçлăхĕнче вĕрентнĕ чухне тăван чĕлхе уйрăмлăхĕсене шута илни пĕлтерĕшлĕ.

## Вĕрентĕвĕн пĕтĕмĕшле тĕллевĕсемпе задачисем

Ку чухнехи тĕпчевсем кăтартнă тăрăх, пуплев аталанăвĕ ачан пĕтĕм ӳсĕмне вăйлă витĕм кӳрет. Çавăнпа шкулченхи вĕренӳ учрежденийĕсен пуплеве аталантарас ĕç программин тĕллевĕсемпе задачисене тĕрĕс палăртни питех те пĕлтерĕшлĕ. Çак ыйтăва меслетçĕсем расна тапхăрсенче тĕрлĕрен уçăмланине палăртмалла.

Программăра ачасен тăван пуплевне аталантарассин пĕтĕмĕшле тĕллевĕсемпе задачисене палăртнă чухне эпир хальхи меслетлĕхре çак ĕçе тĕрĕс кăна мар, пахалăхлă çыхăнуллă пуплев хăнăхăвĕсене калăпласипе çыхăнтарнине те тĕпе хутăмăр паллах, ачасен ӳсĕм уйрăмлăхĕсемпе мехелне те шута илтĕмĕр.

Тĕп тĕллев вара хăй вакрах задачăсем çине пайланать. Ф.А. Сохин ертсе пынипе ирттернĕ пуплев аталанăвĕн ыйтăвĕсене тĕпченисем çинче никĕсленсе шкул çулне çитмен ачасен тăван пуплевне ăнăçлă аталантарас тĕлĕшпе шкулченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсем умне çакăн пек задачăсем тăратма пулать тетпĕр:

— ачасене чĕлхе тытăмĕн тĕрлĕ сийĕсене (фонетика, лексика, грамматика) вĕрентсе пырасси;

— пуплевре чĕлхен тĕрлĕ майĕсемпе усă курма вĕрентесси, çыхăнуллă пуплеве аталантарасси, унăн икĕ форми-

не — монолог тата диалог — калăплас хăнăхусене харпăр-лама пулăшасси; паллă ыйтусемпе тĕрлĕ пуплев лару-тăрăвне йĕркелесе ачасене пултарулăх ĕçне явăçтарасси;

— таврари çынсемпе (тантăшĕсемпе, аслисемпе) калаçса хутшăнма хавхалантарасси, тĕрлĕ ĕç-хĕлпе вăйăсенче, тĕрлĕрен сăлтавпа çынсемпе хутшăнма явăçтарасси;

— чĕлхе тата пуплев ансат пулăмĕсене ăнланас пултарулăха вăратса амалантарасси.

Шкулччехи вĕренӳ учрежденийĕсенче ачасен пуплевне аталантарасси пур тĕрлĕ ĕçпе вăйăра, мĕнпур занятире пулмалла. Тăван чĕлхе занятийĕсенче вара çак ĕçе тĕллевлĕн туса пымалла. Ку занятисен тĕп задачи — тăван чĕлхе пулăмĕсене уйрăммăн тата пĕтĕмлетсе ăнлантарма хăнăхталасси. Çавна май ача чĕлхе пулăмĕсене харпăр хăй тĕллĕн сăнама хăнăхать, хăйĕн пуплев пултарулăхне ăнăçлăрах хăвăртрах аталантарать. Шкулчченхи кĕçĕн ушкăнран пуçласа ачасене сăмахпа, унăн пĕлтерĕшĕсемпе, пуплевре усă куракан формисемпе, янравĕпе ытларах кăсăклантармалла, тăван чĕлхери сăмах пулу мелĕсене ăнкарма пулăшмалла, çĕнĕ сăмахсем тума хавхалантармалла, çыхăнуллă пуплев хăнăхăвĕсене пуянлатмалла.

## ПĔРРЕМĔШ КĔÇĔН УШКĂН

### Программăн тĕллевлĕ пайĕ

Япаласемпе пулăмсене, вĕсен пахалăхĕсене, тăрăмĕсемпе пĕлтерĕшне, аслисен ĕçĕ-хĕлне хăй сăнанă тăрăх ят пама хăнăхтарасси, вĕсене асăмлама тата вĕсемпе харпăр хăй пуплевĕнче усă курма хавхалантарасси.

Пуплевпе харпăр хăй ĕç-хĕлне ăнлантарасси, ят парасси, ыттисен пуплевне курăмлăхсăрах итлесе ăнланас пултарулăха аталантарасси.

Пуплеве аслисемпе (тăвансемпе тата воспитательсемпе) хутшăнмашкăн усă курма, вĕсен ыйтăвĕсене хуравлама, мĕн курни, илтни, пĕлни çинчен каласа кăтартма хăнăхтарасси.

Халăх сăмахлăхĕн пĕчĕк жанрĕсемпе, сăмах янравлăхĕпе кăсăкланма хăнăхтарасси, пуплев сăнарлăхĕпе, интонаци пуянлăхĕпе киленме вĕрентесси.

Ачан таврари пурнăçа ăса хывас кăсăклăхне тивĕçтересси тата хавхалантарасси, унăн тимлĕх уçлăхне анлăлатасси, сăмахлăхне пуянлатма майсем туса парасси.

Ачана вăййăн, кулленхи ĕç-хĕлĕн пур тапхăрĕсенче те хăй ĕçне пуплевпе йĕрлеме хистесси, малтанах мĕн туни çинчен каласа пама, ĕçленĕ (выляна) май каласа пыма, мĕн тăвасси çинчен каласа пама вĕрентесси.

Ачана харпăр хăйне тыткалас ансат правилăсемпе, хăйне «юрать», «юрамасть», «кирлĕ» сăмахсемпе килĕшӳллĕн тытма вĕрентесси. Çак сăмахсемпе пуплевре вырăнлă усă курма хистесси.

Ачана воспитателе ыйтусем пама хистекен ситуацисем тăвасси, тĕрлĕ сăлтавпа калаçăва явăçтарасси, хăйĕн ĕçĕсем çинчен каласа пама хавхалантарасси, ачан пуплев пуçарулăхне мухтасси.

Артикуляци аппаратне тата сасăсене илтес пултарулăха хавхалантарасси (фонематика чухлавне аталантармалла).

Литература пуплевне ытларах илтме майсем туса парасси.

Ачана илемлĕ пуплевĕн тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртмалли сăнарлăх хатĕрĕсемпе паллаштарасси, интонаци, хăвăртлăх, тембр, сасă вăйĕ т. ыт. те.

### Пуплев ĕçĕ-хĕлĕн содержанийĕ

#### Сăмах йышне аталантарасси

***Çак пуплев пайĕсен пĕлтерĕшне ăнланмалла:***

— килти тата хир-вăрманти чĕр чунсемпе вĕсен çурисене, пахча çимĕçе, улма-çырлана, ӳсен-тăрана, транспорта палăртакан япала ячĕсене;

— çитĕннисен çемьери, ача садĕнчи, урамри ĕçĕ-хĕлне, кăмăл-туйăма *(савăнать, кулать, макăрать)*, хутшăнусене *(хĕрхен, пулăш, пар)* пĕлтерекен глаголсене; тĕсе, капаша тата хăш-пĕр пахалăха *(пысăк — пĕчĕк, сивĕ — вĕри, йĕпе — типĕ, йӳçĕ — пылак, лайăх — япăх)* палăртакан паллă ячĕсене;